20-46

Раççей Хветератсийĕн Сотсиалисăмпа Канаш Респупликки.

Пĕтĕм тĕнчери пролеттарисем, пĕрлешĕр!

К. Самойлова.

# Халăх хушшинчи ĕçлекен хĕр-арăмсен сотсиалисăм кунĕ.

## (Международный Социалистический день работниц).

На чувашском языке.

Тĕп Чăваш Пайĕ кăларнă.

ИЗДАТЕЛЬСТВО
Центрального Чувашского Отдела при Народном Комиссариате по национальным делам.
ХУСАН - 1920 ÇУЛ.

## 1. Ĕçлекен хĕр-арăмсен халăх хушшинҫи сотсиалисăм кунне хăçан хисеплемелле тунă?

Пуш уйăхĕн саккăрăмĕш кунĕнҫе кашни çул пур çĕрти ĕçлекен хĕр-арăмсем те хăйсен халăх хушшинҫи сотсиалисăмлă праçникне тăваççĕ. Ун ҫухне вĕсем хăйсем органисатсисене пуçтарăннă хĕр-арăм пролеттари вăйĕсене пăхаççĕ, капитталлă тĕнҫене хăйсем пĕрлешсе ҫăмăртаннине, сотсиалисăмлă йĕркешен ĕçлекенсем пурте ирĕке тухҫĕр тесе кĕрешме хатĕрне кăтартаççĕ.

Лăп вунă çул ĕлĕк, 1908 çулта, Керманире ĕçлекенсем партти сйестĕнҫе пролеттари хĕр-арăмĕсем хушшинҫе ĕçлес ĕçе тĕплĕрех тумалла, пролеттари хĕр-арăмĕсене тăрăшса вĕрентмелле, вĕсене ĕç тума вăратмалла, вĕсене пĕрлештерсе ĕçлеттермелле тумалла тесе постановлени тунă.

Тепĕр çулне 1909 çулта, Америккă пролеттарийĕ пуçласа Америккă хĕр-арăм пролеттари сотсиалисăм праçникне тунă, 1910-мĕш çулта

Коппенкакен хулинҫе ĕҫлекен хĕр-арăмсен халăх хушшинҫи пухува (кохверентсине) пуҫтарăннă. Ҫак конхверентси кашни ҫул ĕҫлекен хĕр-арăмсен халăх хушшинҫи сотсналисăм кунне хисеплесе праҫник тумалла тунă. Ҫав куна ĕҫлекен хĕр-арăмсем хушшинҫе ҫул кăтартса вĕрентсе, хăйсем ирĕке тухассишĕн ĕҫлеме вăратасшăн тăрăшса ирттермелле. Ытти пур ĕслекен хĕр-арăмсене пролеттарийе тĕнҫине ирĕке кăларасшăн кĕрешекенсемпе пĕрле кĕрешме хутшăнтарма тăрăшас пулат.

Ҫавăнтан вара, ҫак Коппенкакен хулинҫе тунă йăлана астуса, ҫĕнҫери пур ĕҫлекен хĕр-арăмсем те кашни ҫулах ҫак халăх хушшинҫи пролеттари праҫникне тăваҫҫĕ.

## 2. Ĕҫлекен хĕр-арăмсен халах хушшинҫи праҫникне мĕншĕн тăваҫҫĕ.

Ҫак халăх хушшинҫи сотсиалисăм кунне хĕр-арăм ĕҫлекенсем хăйсене уйрăм орканисатси тăвасшăн тумаҫҫĕ, халиҫҫен пур орканисатсисене, сотсиал-темократсен парттине, прохвеҫҫи сойусĕсене мĕпле те пулин, ĕҫлекен хĕр-арăмсене ытларах кӳртес теҫĕ тăваҫҫĕ, мĕншĕн тесен, хĕр-арăм-

сем хӑйсем кайа йулнипе ҫав орканисатсисене пит сахал кӗреҫҫӗ.

Ӗҫлекен хӗр - арӑмсен халӑх хушшинҗи сотсиалисӑм кунне хӗр - арӑмсен ҫывӑракан шухӑшне вӑратса, вӗсем те ӗҫлекенсем ушкӑнӗнҗе иккенне, хӑйсем ирӗкӗшӗн кӗрешмеллине, тӗнҗери ӗҫлекен пур хӗр-арамсене те револҗутси Интернатсионалҗне кӳртсе пӗрлештерме тӑваҫҫӗ; ӗҫлекен хӗр-арӑмсен халӑх хушшинҗи сотсиалисӑм кунӗ ӗҫлекенс рҫынӗ хӗр-арӑмӗ мӗнӗпех тӗнҗипе халӑх хушшинҗи ушкӑна кур тесшӗн. Сотсиалисӑм праҫникӗнҗе тӗнҗери пур ӑпланакан ӗҫлекен хӗр-арӑмсем хӑйсен кайа йулнӑ йулташӗсене хӑйсен орканисатсисене кӳртме ҫеҫ тӑрӑшмаҫҫӗ, пуршуй хӗр-арӑмӗсем ӑплансах ҫитеймен ӗҫлекен хӗр-арӑмсене хӑйсен пуршуйлӑ серепиcене ҫаклатасран ӗҫ хӗр-арӑмӗсене тӗрлӗ пуршуйла клупсене сӗтӗресрен сыхлаҫҫӗ. Пуршуйла шухӑшлакан хӗр-арӑмсем вӗсем хӗр-арӑмсен хӑйсен уйрӑм инттерессем пур, вӗсем парттирен те классран та килмеҫҫӗ, теҫҫӗ.

Ӑпланакан ӗҫлекен хӗр-арӑмсем хӑйсен пухӑвӗсенҗе кайа йулнисене хвемипискӑсем (хӗр-арӑм ӗҫӗсемшӗн тӑракансем) ултавпа хӑйсем

йенне çавăрнине кăтартса тăраççĕ. Вĕсем хăй сем йулташĕсене уйрăм хĕр-арăм орканисатсисем вĕсен шухăшне кăна пăтратса, хăйсен пурăнăçне тӳрлетнĕ çĕрте кĕрешме вăйсăрлатса хăвараççĕ, тесе ăнлантараççĕ.

Ăнланакан ĕçлекенсем арçынни хĕр-арăмĕ мĕнĕпех ĕнтĕ ĕç хĕр-арăмĕ варанса ăнланакан пулни хĕр-арăм инттересне хута кĕме çеç мар, мĕн пур ĕçлекенсемшĕн кирлине лайăх ҫухларĕç.

Ĕç хĕр-арăмĕ пĕрлешмесен, ăнланмасан вĕсем ĕçлекенсен екномипе политтиккă пурăнăçне ҫăрмантарса тăраççĕ (пыраççĕ). Ĕçлекен хĕр-арăмсем хăйсем прохвеççи сойусĕсем тумасан, вĕсем „сарă“ тийекен хуçасеп сойусне çакланма пултараççĕ. Вара ĕçлекенсен стаҫкисене пăсма пултараççĕ; хĕвел-анăçĕнти патшалăхсенҫе ун пек сойуссем пур.

Ĕçлекен хĕр-арăм политтиккă тĕлĕшĕнҫен кайа йулни, политтиккă пурăнăçĕнҫе кирлине пĕлменни, ăнланманни вĕсене ҫас-ҫасах пуйансен, пуршуйла политтиккă парттисен аллине кĕрсе ĕçлекенсен инттересне хирĕç пымалла тăват.

Ĕçлекен хĕр-арăмсем пĕрлешни усăллине, вĕсене пĕр аслă ĕçлĕх армине кӳртме кирлине

астуса тăрсă, йут патшалăхсенђи малтан пыракан ĕçлекенсем çак халăх хушшинђи сотсиалисăм праçникĕнђе хĕр-арăмсене пулăшса çине тăрса ĕçлеççĕ.

## 3. Йут патшалăхсенђе ĕçлекен хĕр-арăмсен халăх хушшинђи сотсиалисăм кунĕ мĕнле иртет.

Йевроппăн, Америккăн промышленноçт пур хуласенђе кашни çулах ĕçлекен хĕр-арăмсем халăх хушшинђи сотсиалисăм праçникĕ кунĕ валли пит хатĕрленеççĕ: пухусем, миттинксем туса пур ĕçлекен халăха пĕтĕм тĕнђипех ђыслакан праçник çинђен каласа ăнлантараççĕ. Праçникĕ кунĕ ĕçлекенсем пур оркнисатсисенђе, клупсенђе, прохвеççи сойусĕсенђе пит ђаплă миттинксем, пухусем тăваççĕ, ĕçлекенсен пеђђађĕ праçник çинђен нумĕрĕ-нумĕрĕпе хаçат, шурнал çаптарса кăларат.

Тăвана тăван вĕлерекен çак ылханлă вăрçă пуçланиђђен ĕçлекен хĕр-арăмсен халăх хушшинђи сотсиалисăм кунне ĕлĕк Керманире пит ђаплă иртттерне.

Промышленноçт пур пĕр хула та Керманире çак праçнике тумасăр йулман. Хулара ĕçлекен

хӗр-арӑмсем хӑйсен миттинкисене йалсенҗе те нумай ҫӗрте тунӑ. 1913 ҫулта пӗр Перлинрах ҫав кун ӗҫлекенсен 50 пуху пулнӑ, Венӑра — 38 пуху пулнӑ. Кашни пухурах каласа вӗрентме парттире тӑракан ҫынсем ҫитеймен те, миттинксене ик-виҫ куна йамалла тунӑ, ҫапла вара ӗҫлекен хӗр-арӑмсен сотсиалисӑм кунӗ вырӑнне, сотсиалисӑм ерни пулса тӑнӑ.

Ӗҫлекен хӗр-арӑмсен кунне Кермани, Анкли, Америккӑ пек пысӑк, пуйан, патшалӑхсенҗе ҫеҫ мар җаплӑ миттинксем, пухусем, темонстратсисем туса хисепленӗ,—пӗҗӗк патшалӑхсенҗе те, ҫавӑн пек 1913 ҫулта Коллантире ҫав куна 20 хулара праҫник туса хисепленӗ, пухусене пыракан ӗҫлекенсем ҫав тери нумай пулнипе праҫнике ернипех тунӑ.

## 4. Раҫҫейри ӗҫлекен хӗр-арӑмсен халӑх хушшинҗи сотсиалисӑм кунӗ.

Халӑх хушшинҗи пролеттари праҫникӗ Раҫҫейра пирӗн йепле иртнӗ?

Каласси те ҫук; патшан хай тӗллӗн тытса тӑрас хӗскӗҗӗ хӗстернӗ вӑхӑтра ӗҫлекен хӗр-арӑмсен ӑнланакан пӗҗӗк ушкӑнӗ йут патшалӑхри

хăйсен йулташĕсенҫен йулас мар тесе тăрăшнă, вĕсем май килнĕ тĕлте пухусем туса хăйсен Раҫсейри ĕҫлекен хĕр-арăм йулташĕсене халăх хушшинҫи праҫник мĕне пĕлтерчине каласа кăтартса, каппитталпа тата патшалăха хăй ирĕкĕпе кăна тытса тăнипе кĕрешме ҫĕннĕ.

Пирĕн ĕҫлекен хĕр-арăмсем те ун ҫухне хăйсене уйрăм хĕр-арăм орканисатсисем тума пухăнман, хĕр-арăмсене шайлаштарас тесе илĕртекен пуршуйла хĕр-арăмсем хăйсем патне пит ҫĕннĕ пулин те, ăнланакан ĕҫлекен хĕр-арăмсем патша вăхăтĕнҫех патша ҫухнехи хĕсӳпе каппиттал тарҫи ҫухнехи тутăхпă сăнҫăрсене пăрахса, пур ĕҫлекенсемпе пĕрлешсе кĕрешсен тин ҫĕнтерессине ҫухлапă.

Ĕҫлекен хĕр-ăрамсенҫен пĕри хăйсен 1914 ҫулта тухнă „Ĕҫлекен хĕр-арăм“ йатлă шурналта халăх хушшинҫи сотсиалисăм кунĕ пролеттарисем кĕрешнине ак ҫапла ăнланса ҫырнă:

„Пайан ĕҫлĕх праҫникĕ, пайăн ҫуклăх праҫникĕ“,
Пăрăнăр, сарлакарах ҫул парар!
Пирĕнпеле йунашар упăшкасем, пиҫҫесем
Аппасем, аттесем те йунашар!

Ирĕкшĕн çунакан, ирĕке йуратаканĕ,
Ут малалла! Сасӑ хытӑ ҫ̌ĕнет!
Сарӑлса выртаç куç умĕнҫ̌е инçетри çĕрсем
Тӑвӑрланса хĕсĕнсе пыраç пирĕн еретсем
Хытӑран-хытӑ илтĕнеç пирĕн ĕçлĕх йурри-
сем“.

Ӑнланакан хĕр-арӑм хайсен шурналĕнҫ̌е патша вӑхӑтĕнҫ̌и тĕттĕм тĕп сакайĕнҫ̌е пурӑннӑ ҫ̌ухпех çапла çырнӑ. Ӑна хирĕç пĕрле хĕрсе ĕçлеме ҫ̌ĕнне пекех çав „Ĕçлекен хĕр-арӑм“ йатлӑ шурналӑн пĕрремĕш нумĕрĕнҫ̌е ĕçлекенсенҫ̌ен тухнӑ поет М. Арттамонов çапла çырат̆:

„Ĕçлекенсен праçникĕнҫ̌е
Çĕн шурӑма туртӑнӑр
Телей тупса кунсем курӑр,
Есир текех ҫ̌ура мар.
Хура кунсем иртнĕ хыççăн
Савӑнӑр-ха ерттелпе,
Ҫ̌ĕрĕ ҫ̌унпа çине тӑрса
Вӑй пуçтарӑр кĕрешме“.

Ӑнланакан ĕçлекен хĕр-арӑмсем Раççейри ытти ĕçлекенсемпе пĕр рете тӑрса кĕрешесшĕнние Йунлӑ Микулай патшан йулашки кунĕсене пурӑнакан тӳре-шари шухӑшласа илсе 1914

мӗш ҫулта ӗҫлекен хӗр-арӑмсен сатсиалисӑм праҫникӗ ҫитиҫҫен ерне малтан халӑх хушшинҫи хӗр-арӑм пролеттари праҫникне тума хатӗрленекен хӗр-арӑмсене, ушкӑнӗпех хупса лартнӑ. 30 ӗҫлекен хӗр-арӑм, тата „Ӗҫлекен хӗр-арӑм“ йатлӑ шурналӑн ретаксине пӗтӗмпех арестоват туса 3 ҫула патшалӑхран кӑларса йарса вӗсене пелитси пӑхса тӑмалла тунӑ.

Унтан вара вӑрҫӑн йунлӑ тӗлӗкӗ ҫас пуҫлanса кайрӗ, самана йӗркине кайалла сӗтӗрекен Романӑв йӑхӗ пӗтес умӗн тапӑргату пуҫланса кайнипе, паллӑ, револҫутси пуҫланас умӗнхи ҫулсенҫе ӗҫлекен хӗр-арӑмсен сотсиалисӑм праҫникне тума май та килмен.

Третья Государствен. Типография в Казани.